# Ф. П. ПАВЛĂВ.

(1892—1931)

Федăр Павлович Павлов 1892 çулта Патĕрйел палĕпче (Çĕрпӳ районĕ), вăтам хресчен çемйинче, çуралнă. Иккассинчи 2-класлă шкула вĕренсе тухсан Чĕмпĕрти Чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн икĕ çул хушши (1911—1913) чăваш шкулĕнче музыкăна вĕрентекен учитĕл пулса ĕçленĕ. Унтан Чĕмпĕрти духовни çеминарине вĕренсе тухнă (1913—1916). 1917 çулта Хусанта уçăлнă Хĕвелтухăç йенчи халăхсен историпе археологи институтне вĕренме кĕнĕ, анчах ку шкул часах хупăннипе Ф. П. Павлăв ăна вĕренсе тухайман. Октăбĕр революцирен пуçласа, виличчен çак вырăнсенче ĕçлесе пурнĕ: халăх судйи, йалти шкул учитĕлĕ, Шупашкарти уонори пайан пуçлăхĕ, унтан Чăваш автономлă облăçĕнчи Çутпайĕн музыкă уйрăмĕнче ĕçленĕ, педтехникумра вĕрентнĕ, Облăçри халăх судйисен Канашĕн членĕ, Главсуд членĕ, Обземуправленин йурис-консулҍчĕ, йулашкинчен Музыкă техникумĕнче вĕрентекен пулса ĕçленĕ. 1930 çулти кĕркунне, туберкуҍозпа чирленине пăхмасăр, Ленинградри конçерваторине музыкă ĕçне вĕренме кĕнĕ. 1931 çулта, ийуҥ уйăхĕн пуçламăшĕнче, Хура тинĕс хĕрринчи Сочи йатлă курорт çывăхĕнчи туберкуҍоз санаторинче вилнĕ.

Ф. П. Павлăв чăвашсен паллă музыкант-композитăрĕ. Вăл чăвашсен «халăх йуррисене» сахал мар пухса гармонилесе пичетлеттернĕ. Çак ĕç унăн пурнăçĕнчи чи пысăк, чи паха ĕç.

Çав вăхăтрах вăл, шкулра вĕреннĕ çулсенчен пуçласах, илемлĕ литературăпа та хытă интересленнĕ, художĕствăлă произведенисем çырнă. Пичетленни вĕсенчен иккĕ: пĕри—«Сутра» йатлă комеди (1918 çулта çырнă), тепри—«Йалта» йатлă драмă (1922 çулта пичетленнĕ).

«Сутра»—автăр халăх судйинче ĕçленĕ вăхăтра чăваш ĕçхресченĕсен пурнăçне тĕпчесе сăнанипе усă курса çырнă произведени. Вăл—вак хуçалăхлă хресчен çемйинче пулса иртекен кулленхи харкашу-йатлаçу тавраш не сатирăлă кулăпа çунтаракан комеди. Ку пйесăна хулара та, йалта та пайтах лартаççĕ: пăхакансен кăмăлне вăл пит килĕшет.

«Йалта» йатлă 4 пайлă драмăра автăр империалисăм вăхăтĕнчи чăваш йалне сăнласа кăтартнă. Произведенири чи паллă геройсем: чăваш хĕрарăмĕ Йеҍук, йалти чухăн хресчен Ваҥук, йал куштанĕ Çтапан.

Йеҍук—Пăрчăкан йатлă тăлăх арăмăн амаçури хĕрĕ. Йеҍукпа Пăрчăкан çителĕклĕ пурнăçпа пурнаççĕ: Йеҍук ашшĕнчен вĕсене пысăк пурлăх йулнă. Йеҍукпа Пăрчă анăн лашапа ĕне те темиçе, çипуç та пуян. Кăна драмăра акă йепле кăтартнă.—Пăрчăкан (Йеҍукран ыйтать): «Ĕнисене мĕн патăн?.. Лашисене мĕн патăн?». Йеҍук: «Ĕни-

сене пахчаран курăк çулса патăм... Лашисене—сĕлĕ патăм». Пăрчăкан (Йеђука): «Çипу çырă, хырăм тутă, тата мĕн кирлĕ?». Йеђук: «Мана нимте кирлĕ мар». Пăрчăкан: «Аçупа аннӳ камшăн тăрăшнă?. Пирĕн пуйанлăх йур пек çӳлтен çуса пулман. Ĕлĕкренпе çĕр тара илсе пухнă ăна... Ман шухăшпа, санăн çав çар,çипуçлă ушкăнпа çӳреме питех килĕшмест. Асту: есĕ пуйан хĕрĕ, çавна ан ман». Тепĕр тĕлте тата Пăрчăкан калаŏ: «Пуйанлăх, тепĕр тесен, хамăн та ситет».

Çак пуйан çын хĕрĕ Йеђук чухăн Ваңука йуратса каччă кайаŏ. Вĕсен мăшăрланнă хыççăнхи чухăн пурнăçне автăр çакăн пек сăнласа кăтартаŏ.—Ваңук: «Йеђук, есĕ апат хатĕрле-ха»... Йеђук; «Халех. Апачĕ те ним те çук та, мĕнех хатĕрлес-ши?». Ваңук: «Кăвас пĕтни-ха вара?». Йеђук: «Пур кăштах». Ваңук: «Кăвас çине сухан йар. А ку шăхличи (ача) вађђи качака суса кĕр. Вара çитрĕ те пире».

Ваңук вăрçăна салтака кайсан, Йеђукăн, кил-çурт çунса кайнă пирки, Йăскар карчăк патĕнче ушалăхра пурăнмала килет. Ачи унăн вилет... Ĕлĕк пуйан çын хĕрĕ пулнăскерĕн, Йеђукăн хале «пĕр пыра тăрантарасшăн çын тарçи» пулса пурăнма тивет. Йăскар карчăк ăна пĕр май ĕçлеме хăвалаŏ.—«Мĕншĕн тата арламастăн? Сана ахалех тăрантарма епĕр çĕрме пуйан терĕн-им?» Çав вăхăтра тата Йăскар, Çтапан укçа парса хĕтĕртнипе, Йеђукăна Çтапанпа йавăçтарасшăн ĕçлет. Йеђук хăлхине вăл çакăн пек сăмахсемпе йӳсĕхтерет: «Çавăн пек кĕлеткепе епĕ сар çу çисе пурнăп. Авă, Çтапан миçе хут килсе кайрĕ кăçал. Мĕн тутуна пăрахтăн, тепĕр тесен?»

Акă Ваңук йулташĕ Пађђа вăрçăран таврăнаŏ. Вăрçăра вăл Ваңукпа пĕрле пурăннă. Куштан Çтапан, Йеђука хăй майлă çавăрса каччă илес шухăшпа, Ваңук вилни çинчен хăй аллипе ултавлă писмо çыраŏ те, Йеђука—«çак писмона Пађђа илсе килнĕ»,—тесе суйаŏ.

Йеђук, хут вулама пĕлменскер, Çтапанăн ултавлă сăмахĕсене ĕненет. Кун хыççăн Çтапан Йеђука каллех хăй ăна савни çинчен калама тытăнаŏ. Йеђук Çтапана татăклăн калаŏ: «Кай ман çумран! Хăвар мана! Ман чĕрене вырăнтан ан хускат. Епĕ ĕмĕрте те санăн арăм пулас çук. Есĕ çапатăн. Ей, телейсĕр чун. Хĕрхенетĕп епĕ сана. Йăвăр пулмала сана та. Санран ырă çын пулаччĕ-и тен. Çавах та хăвар есĕ мана. Епĕ те чĕре тапраннă çын. Телей курас çук есĕ манпала»...

Çтапан тухса кайсан Йеђук хăйпе хăй калаçаŏ: «Çтапан... Пысăк кайăк пек вĕçсе килчĕ вăл ман çумма. Унăн сăмахĕсем ман ăша вăрă пек шăппăн кĕрсе ларчĕç...» Çавах та, Ваңука аса илсен, хуйхăлă Йеђук шыва сикет. Ăнсăртран таçтан Çтапан сиксе тухаŏ те, Йеђука шывран туртса кăлараŏ. Унтан вăл каллех Йеђука хуллен калаŏ: «Йеђук, епĕ сана чунтан-вартан калатăп: хĕрхенетĕн-и есĕ мана». Йеђук (Çтапан çине пăхса): «Ман пурнăçа çăлнăшăн—епĕ санăн». Çтапан: «Ырă çынсем! Ваттисем, çамрăксем! Епĕ Йеђука качча илетĕп—çавăнпа çакă кунсенче сире туйа пыма чĕнетĕп!»

Драмăн йулашки пайĕнче, Йеђукпа Çтапан туйĕ сикнĕ вăхăтра,

Ваҕук çитсе кӗрет. «Йеҕук Ваҕук йенеле пӗрре ура йарса пусаҫ те, витан кайса ӳкме тăраҫ. Çтапан Йеҕука çӗклесе тенкел çине лартаҫ». Ваҕук Йеҕукран ыйтаҫ: «Савнă йулташăм! Палатăни есӗ мана?» Йеҕук чӗнмест. Кайрантарах вăл калаҫ: «Ей, телейсӗр Ваҕук! Епӗ те сана нумай кӗтрӗм. Анчах, турă тепӗр тӗслӗ сырнă. Епӗ ӗнтӗ тин сан пата пырсан та хам телейе тупас çук. Кайарах пултăн. Чăннипе каласан, епӗ сана хӗрхенетӗп. Сут тăвас тетӗн пулсан, сут ту—санăн ирӗк». Ваҕук: «Есӗ йуратса кайатăнп?».

Йеҕук (вилнӗ пек): «Йуратса»...

Çтапана воҕвӗрпа персе пăрахма хатӗрленекен Ваҕука Йеҕук калаҫ: «Чарăн, Ваҕук! Епӗ тин санăн арăму мар. Мӗн тăвас тепне ту...» Ваҕук: «Вил апла пулсан!» (персе пăрахаҫ).

Çакăн пек хӗрарăм ӗнтӗ Йеҕук. Вăрçă вăхăтӗнчи унăн пушалă пурнăçне аван сăнласа кăтартнă. Анчах Йеҕукăн кайранхи ӗçӗсем питех ӗненмеле мар: пӗр йенчен, вăл Ваҕука пит хытă йуратаҫ,—çавăнпа вăл вилни çинчен илтсен шыва сикет; тепӗр йенчен, шывран туххсанах, куштан Çтапана вăл калаҫ: «Ман пурнăçа çăлнăшăн—епӗ санăн». Салтакран таврăннă Ваҕука вăл калаҫ: «Кайарах пултăн...»

Тӳрех калас пулаҫ: Йеҕук—сăпатланса çитеймен тип. Вăрçăран асапланса килнӗ чухăн Ваҕука та, вăрçă вăхăтӗнче йалта ӗçхалăха пусмăрласа пурăнакан куштан Çтапана та,—Йеҕук пӗр пек сăмахсемех калаҫ.

Ваҕука вăл калаҫ: «Ей, телейсӗр Ваҕук... Епӗ ӗнтӗ тин сан пата пырсан та, хам телейе тупас çук... Чăннипе каласан, епӗ сана хӗрхенетӗп»...

Çтапана Йеҕук калаҫ: Ей, телейсӗр чун. Хӗрхенетӗп епӗ сана. Йăвăр пулмала сана та. Çавах та хăвар есӗ мана. Епӗ те чӗре тапраннă çын. Телей курас çук есӗ манпала...»

Йеҕукăн Çтапана каланă сăмахсем ӗççыннишӗн ытла та тарăхмала сăмахсем. Куштан Çтапан хăйӗн малтанхи арăмне, сывмарскерне, хӗнесе пурăннине Йеҕук пӗлет. Йеҕукăн амаçури амăшӗ—Пăрчăкан—çумне çыпăçса, Çтапан унăн «пӗтӗм пуйанлăхне хăй аллине пуçтарса илнине» Йеҕук пӗлет. Çтапан йалта «халăх йунне ӗçекен вăрăм туна» пулса пурăннине Йеҕук пӗлет,—вăл Çтапана малтантарах хăйех «—Есӗ мана мулпа астарасшăн-и?»—тесе каланă. Çаксене пурне те аван пӗлсе тăракан Йеҕук—куратăр-и?—Çтапана кайран калаҫ: «Хӗрхенетӗп епӗ сана. Йăвăр пулмала сана та... Телей курас çук есӗ манпала...».

Ӗççыннисем вăрçăра асапланса пурăннă вăхăтра йалта ашкăнса пурнакан куштана—«Йăвăр пулмала сана та» (йурату пирки!) тесе калани—ытла та киревсӗр йапала.

Тата акă мӗн асăрхамала: Çтапанпа калаçнă чух Йеҕук ăна—«телей курас çук есӗ манпала», тет; Ваҕук вăрçăран таврăнсан Йеҕук ăна—«Епӗ... сан пата пырсан та хам телейе тупас çук», тет. Çапла ӗнтӗ, Çтапанпа калаçнă чух Йеҕук Çтапан телейӗ çинчен шухăшлаҫ, Ваҕукпа калаçнă чух—хăй телейӗ çинчен шухăшлаҫ. «Епӗ сана нумай кӗтрӗм... Кайарах пултăн»...—тет ним айăпсăр, мӗскӗн Ваҕука Йеҕук.

Çаксем ырки вулакан ёççыннин кăмăлĕ, драмăн малтанхи пайĕсенче Йеҫук йенне туртăнаҫ пулсан—йулашки пайсенче, III-мĕш пайĕн II-мĕш курăнăвĕнчен пуçласа, Йеҫукран сивĕнет.

Ваҫук — чухăн хресчен. Вăл кăмăллă çын, çав вăхăтрах вăл «пĕри йуплă» паттăр. Драмăн малтанхи пайĕнчех вăл, Пăрчăкан кийĕнче Çтапанпа тĕлпулсан, ăна хирĕç хăйуллăн калаҫ: «Ей, халăх йунне ĕçекен вăрăм туна! Асту! Епĕ... ирĕкре тĕл пулсан, санпа кĕрешме хатĕр. Акă çакă чăмăр сан пуçран тивсен—йе пуçу саланса кайĕ, йе ĕмĕрлĕхе сĕрĕм тивсе йулĕ!»

Хăй салтак ĕçпе кантура кайнă вăхăтра, Çтапан Йеҫук патне пырса, ăна пусмăрлама хăтланнăшăн, Ваҫук ăна вирлĕн хĕртсе илет, тата тивĕçлипе айăпласа намăслантараҫ.

Вăрçăран йала таврăнсан, Ваҫук хăйĕн арăмĕн туйне лекет. «Хамăр йала курсан, чун хĕпĕртенипе чăтаймарăм—макăрса йатăм. Йала çитсен йалĕпе туй сикет. Кам туйĕ ку? тетĕп... Пĕр сăмах та чĕнмеççĕ, йытăран тарнă пек хăраса тараççĕ». Тарăхнă Ваҫук Çтапана калаҫ: «Епĕр вăрçăра йун тăкнă чух есĕ кунта арăмсене пусмăрлатăни?.. Ман йун тăкăнни сан пуç çине килтĕр!» Хăйĕн арăмне—куштан Çтапана качча кайакан Йеҫука—Ваҫук калаҫ: «Çакă çурăлса, татăлса пĕтнĕ кăвак тумтирлĕ çынна йышанас теместĕн-и?.. Манăн пысăк çунат ӳстерсе сан çумна вĕçсе килес килетчĕ. Епĕ саншăн тыткăпран тухса тартăм. Австри аслă вăрманĕнче тискер кайăксемпе пĕрле пурăнтăм. Хурал тăракансене улталаса аслă Дунай шывĕ урлă ишсе каçрăм...» Урса кайнă куштан Çтапан— «тытăр çакă таркăна!»—тесе кăшкăрсан, Ваҫук волҫвер кăларса Çтапан çине аллине йĕрипен хăпартса тĕллеме пуçлаҫ: «Епĕ сана авлантарас тетĕп, Çтапан»... Анчах Ваҫук Çтапана мар, Йеҫука вĕлерет.

Вулакан ĕççынни пĕтĕм хăйĕн кăмăлĕпе çунса кайнă ăшчиклĕ, çурăлса, татăлса пĕтнĕ кăвак тумтирлĕ чухăн Ваҫука килĕштерет, анчах унăн алли волҫвĕра кирлĕ тĕле пенĕ тесе калама пултараймаҫ.

Çтапан—патша саманинче чăваш ĕçхалăхне пусмăрласа пурăннă куштан—пуйан çын типĕ. Вăл хăй çинчен калаҫ: «Епĕ чаплă пуйан. Ман мулсем нумай... Манран пĕтĕм йал хăраса тăма пултараҫ», тет. Пăрчăкан ун çинчен калаҫ: «Мана, ухмах хĕрарăма, улталарĕ вăл, усал. Ман пĕтĕм пуйанлăха хăй аллине пуçтарса илчĕ... Арăмне çаплах çĕмĕрет... Йеҫук пуçне çавăратăп, тесе мухтанаҫ тет... Йытăланĕ те вăл, ăна никам та чараймĕ».

Хăйне хăй пуйан Çтапан мăн кăмăллăн тытаҫ. Пăрчăкан патĕнче вăл «урай варрине паттăр пек йăвăррăн утса тухаҫ те, чухăн Ваҫука кăшкăрса калаҫ:—«Ваҫук! Кай тухса!» Çавăнтах вăл тата Муççана кăшкăраҫ: «Муçça! Тепре шăлшуррине уçатăн пулсан, халех кăларса перетĕп».
е

Ваҫук ăна—хăй кантура кайнă вăхăтра вăл Йеҫука пусмăрлама пынăшăн—хĕнени çине тарăхса, Çтапан çĕрле унăн кил çуртне вут тĕртсе çунтарса йараҫ. Ваҫук салтака кайсан, Йеҫука хăй йенне çавăрмашкăн Çтапан Йăскар карчăка укçала тытаҫ, кайран тата Йеҫука суйа писмо çырса парса улталаҫ. Ваҫук салтакран таврăнсан, Çтапан ăна кĕретĕнех елекле сăмахсем калаҫ: «Есĕ тыткăнра пулман! Есĕ тарса пурăннăскер! Епĕ сана халех тытарса йаратăп. Тытăр ăна! Тытăр!»

Çакăн пек йурăхсăр çын вăл куштан Çтапан. Анчах, çак усал çыпна автăр илемлетсе, лайăхлатса кăтартма пиккенни палăрать. Çтапана драмăра, пĕр йенчен, Йеђука ытла та хытă савнă пек кăтартнă. Акă тĕслĕх.--Çтапан (Йеђук умне чĕркуçланса ларса) калать: «Ех, Йеђук! Хĕрхен мана... Халиччен мана никам та йуратман. Йе ман чĕрере çунакан вут ахалех сӳнсе ларĕши? Сана йуратма пуçланăранпа епĕ ухмаха йернĕ çын пек çӳретĕп. Ăçта кайсан та есĕ ман куç умĕнче, ман çине пăхса ман чĕрене шăрататăн. Епĕ сан патала аламсене чăсса пĕчĕк ача пек йĕретĕп. Йеђук, Йеђук—йурат мана!.. Çӳлти çутă хĕвел те сан пек ман чуна савăнтараймасть. Есĕ мана йурату сăмахĕ памастăн пулсан, епĕ пайанах хамăн пĕтĕм пуйанлăха хĕм кăвар туса салатса йарăп. Унтан вара хам кăкăра хамах çĕçĕпе касса çурăп та, санăн уру умне килсе ӳксе вилĕп».

Çак сăмахсем тĕлĕшпе вулакансенчен хăшĕ-пĕри калама пултарĕ: «кунта автăр аскăн куштана идеализацилесе кăтартмасть,—вăл кунта йалти кашкăр-сурăх тирпе тăхăнса Йеђука улталасшăн çуннине кăтартать», тейĕ. Кун пек пулсан пит аванччĕ те, анчах ĕç ун пек мар: драмă вĕçне çитиччченех «мăнтăр» куштан Йеђука йăнран кайиччен йуратнă пек сăнланнă. Драмă çак сăмахсемпе пĕтет:

«Çтапан: Йеђук!.. (Йеђук çине пырса ӳкет. Халăх хăраса хытса кайать). Чаршав».

Хăйĕн чирлĕ арăмне ватса пурнакан, Пăрчăканпа йавăçса, тĕрлĕ ултавлă, ирсĕр ĕçсем туса пурнакан куштан Çтапана çакăн пек илемлетсе сăпатлани—«типлă çынсене типлă обстойатĕлствăсенче кăтартни» (Енгĕлс) пулмасть.

Кунсăр пуçне Çтапана тата пит паттăр, нимĕнрен те хăраман çын пек туса илемлетсе кăтартнă. Тĕслĕх: драмă вĕçĕнче Вађук вођвер кăларса, Çтапана тĕллесе—«епĕ сана авлантарас тетĕп, Çтапан»—тесе каласан, Çтапан нимĕн те хăрамасть. «Çтапан: М-мхм... (чавсипе çĕклесе тытса, Вађук çине кашкăр пек пăхса тăрать, унтан шуйтан пек кулса йарать).

Драмăра ĕнентерӳлĕхсĕр вырăнсем урăх та сахал мар. Паллăрахисем çаксем:

1. Йеђук Вађук вилни çинчен илтнĕ-илтмен Çтапана качча тухма килĕшни.

2. Малтанхи арăмĕ вилмесĕрех Çтапан «тăлăх» арăм вырăнче шутланакан Йеђука пĕтĕм туй йĕрки-йăлипе туса качча илни пĕртте ĕненмеле йапала мар: унашкал ĕç чăвашсем хушшинче нихçан та пулман. Кунтах асăрхаттармала: Çтапанăн малтанхи арăмĕ вилнĕ пулсан та, чăвашсен йăлипе, вăл Йеђука туйпа илме пултарайман, уйрăмăнах тата вăрçă вăхăтĕнче.

3. Çтапана качча кайакан Йеђук туйра тин Вађук çĕррине хывса ывăтса—«ку сан çумна çыхнă сăнчăр! Мана вăл урăх кирлĕ мар»,—тени, тата ытти те.

Драмăра кăтартнă ĕç—империалисăм вăрçи вăхăтĕнче вăрçа кайнă салтак хăйĕн арăмĕн пĕтĕм йĕрке-йăлапа пулакан туйне çитсе кĕни—пулман та, пулма та пултарайман.

Ку—йумахла çӳжет кăна, ăна вырăсла «муж на свадьбе своей жены» теççĕ. Ун пек çӳжет йумах сборникĕсенче чăнах та тĕл пулать.

Драмăн пахи йенĕ—чăваш йалĕнчи куштан пусмăрĕпе чухăнсен йурри́çне кăтартнинчен пуçне—тĕрлĕ йăласене сăнласа кăтартнинче, тата халăх йуррисем нумай кĕртнинче.

Ку тĕлĕшпе автăр хăйĕн пысăк маçтăрлăхне кăтартнă.

Драмăна çак йурăсене кĕртнĕ: сăпка йурри, салтак йурри, «Чашки-чашки сар мăйăр» йатлă хуйхăлă йурă, ачасен вăйă йурри, туй йурри, хăйматлăх йурри, тата ытти те. Çак йурăсем, драмăра пысăк ăсталăхпа вырнаçтарнăскерсем, произведенин витĕмлĕхне ытла та вăйлăлатаççĕ.

Акă хуйхăлă Йеђук хурланмала йурă йурласа лараť:

Чашки-чашки ай сар мăйăр та,
Кампа та ларса ай çийем-ши?
Чун хурланаť, чĕрем макăраť те,
Кампа ларса ай пуплем-ши?

Акă савăнăçлă ачасем «Пĕчĕкçеç путене сарă тулă йураťаť» йурра йурлаççĕ. Йурласа пĕтерне çĕре кайăрах йулнă ачисем чупса кĕреççĕ те, Йеђук шыва сикрĕ, тесе каласа кăтартаççĕ. Кунта «контраст» текен «хирĕçÿлĕ пĕрпекмарлăх» прийомне куратпăр. Тата ытти те.

Произведенири чĕлхе ăнланма пит çăмăл.

А с ă р х а т т а р н и: халĕ «Йалта» драмăна урăхлатса пичетлесе кăларнă.